СОЗДАНИЕ РАЗВИВАЮЩЕЙ СРЕДЫ ОБРАЗОВАТЕЛЬНЫХ ОРГАНИЗАЦИЙ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ КАК ЦЕЛОСТНАЯ ПЕДАГОГИЧЕСКАЯ СИСТЕМА

**Мурзукова Валентина Витальевна,**

воспитатель,

Муниципальное бюджетное дошкольное образовательное учреждение «Тобурдановский детский сад «Березка» Канашского муниципального округа Чувашской Республики, Россия;

**Шпакова Надежда Сергеевна,**

воспитатель,

Муниципальное бюджетное дошкольное образовательное учреждение «Тобурдановский детский сад «Березка» Канашского муниципального округа Чувашской Республики, Россия

# ИСПОЛЬЗОВАНИЕ МЕТОДА «ТЕАТР НА ФАРТУКЕ» КАК СРЕДСТВО РАЗВИТИЯ РЕЧИ ДЕТЕЙ ДОШКОЛЬНОГО ВОЗРАСТА

**Аннотация.** «Театр на фартуке» - это дидактическое пособие, которое предназначено для работы с детьми раннего, младшего, старшего дошкольного возраста. Оно представляет собой панно в виде фартука, на который крепятся вырезанные фигуры сказочных героев из фетра. “Театр на фартуке” можно использовать в НОД для закрепления и расширения знаний, а также в свободной деятельности.

**Ключевые слова:** универсальный материал, наглядность, доступность.

Театр – вăл ача – пăча искусствин чи пултаруллă тĕсĕсенчен пĕри. Театр ачана тĕрлĕ енлĕн аталанма пулăшать.

Театр – вăл ачасене чи çывăх тата ăнланмалли искусство. Вăл ачасен ăстăнне çирĕплетме, аталантарма пулăшать. Вĕсен пуплевне пуянлатать, аталантарать, çавăн пекех пĕр-пĕринпе туслă пурăнма, харпăр хăйне тĕрĕс тыткалама, ырă

мар ĕç тунăшăн пăшăрханма, малашне ун пек хăтланасран асăрханма хăнăхтарса пырать.

Театр ачасене савăнтарать, хавхалантарать, малалла аталанма пулăшать. Çавăнпа та педагогсем хăйсен ĕçĕнче воспитани, аталантару, ăспару задачисен хăш пĕр ыйтăвĕсене театр урлă татса параççĕ. Эпир те хамăр ĕçре «Саппун çинчи театр» мелĕпе усă куратпăр.

Саппун çинчи театр – вăл универсаллă чĕлхе, ачасене сюжета ăнланма кăсăклантаракан, "актер-куракан" пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлеме май паракан меслет.

Çак мелпе ачасене аталантарма 2 çултан пуçласа 7 çул таран усă курма пулать. Кĕçĕн ушкăнри ачасемпе воспитатель юмаха хăй "вылять", аслă ушкăнри ачасем вара хăйсем тĕллĕн юмахри сăнарсене выляма пултараççĕ. «Саппун çинчи театр» мелпе усă курса ачасене аталантаракан, вĕрентекен тата воспитани паракан задачисене тĕрлĕ ĕç-хĕлре усă курса ФГОСпа килĕшӳллĕн пурнăçлама пулать.

«Саппун çинчи театр» мел çакăн пек тĕллевпе задачăсем пурнăçлама пулăшать.

Кĕçĕн ушкăнра халăх сăмахлăхĕн пĕчĕк жанрĕсемпе тата илемлĕ литературăн паха тĕслĕхĕсемпе паллаштарасси, вĕсемпе кăсăкланма хăнăхтарасси, тепĕр хут итлесси, ас туса юласси, аслисемпе пĕрле аса илесси, харпăр хăй тĕллĕн каласа парас кăмăла аталантарсси. Сăнарлăха, илемлĕ сăмаха тимлеме, вĕсене аса хума майсем туса парассси. Ăслас пултарулăха аталантарасси (çĕнĕ сăвă-юрă хайлама, юмахсем шухăшласа кăларма т.ыт.те). Ачасене геройсемпе пĕрле савăнма е хурланма хăнăхтарасси. Ку ӳсĕмри ачасем валли çырнă чăваш, вырăс, ют çĕр-шывсен литературинчи хайлавсемпе паллаштарнă чухне усă курма юрать. Тĕслĕхрен: «Чăпар чăх», «Çарăк», «Сармантей», Е.Мишустин «Автан

мĕншĕн ки-ки-ри-ку! тесе авăтать», «Йăва», «Кермен», «Кашкăрпа качака» юмахсем.

Вăтам ушкăнри ачасене тĕрлĕ жанрлă хайлавсемпе паллаштарма майсем тăвасси, вĕсене итленĕ хайлавăн содержанийĕ тăрăх ӳкерчĕксем тума хăнăхтарасси. Илемлĕ хайлавсен тĕп шухăшне ăнланасси, сăнарсене, вĕсен ĕçĕсене тĕрĕс хакласси. Илемлĕ хайлавсен содержанийĕ тăрăх сăмахлă ӳкерчĕксем тăвасси, содержание пĕлтерĕшлĕ пайсене уйăрасси, сӳтсе явма хăнăхтарса пырасси.

Ку ӳсĕмри ачасене «Хĕр ачапа упа», «Тилĕ тус», «Тилĕпе ула кайăк» хайлавсемпе паллаштарнă чухне усă курма юрать.

Аслă ушкăнри ачасене тĕрлĕ жанрлă илемлĕ литература хайлавĕсемпе паллашма майсем туса парасси, вĕсене чăваш халăхĕн тата ытти халăхсен литература пуянлăхĕпе кăсăкланма хăнăхтарасси, хальхи çыравçăсен хайлавĕсемпе паллаштарса пырасси. Литература хайлавĕн чĕлхине пăхмасăр калама хăнăхтарса пырасси. Илемлĕ хайлавсенчен асра юлнă чĕлхе материалĕпе çĕнĕ сăмахсем, çаврăнăшсем, хайлавсем ăсланă чухне творчество пултарулăхне аталантарасси. Чăваш халăхĕн тата ытти халăхсен сăмахлăхĕпе, çыравçăсен хайлавĕсемпе малалла паллаштарасси. Тăван республикăра, Раççейре пурăнакан халăхсен фольклор хайлавĕсемпе паллашма майсем тăвасси, вĕсемпе вăйăра тата ăслав ĕçĕ-хĕлĕнче усă курма хавхалантарсси. Пуплевĕн мĕн пур енĕсене лайăхлатас тĕллевпе маллалла ĕçлесси, ачан творчествăллă пултарулăхне аталантарасси.

Аслă ушкăнри ачасене «Улăп ачи», «Йĕтĕрлĕ тилĕ», П.Эйзин «Кам кĕнĕ пахчана?», «Йытăпа çын туслашни» хайлавсемпе паллаштарнă чухне усă курма юрать.

Кĕскен каласан «Саппун çинчи театр» çакăн пек тĕллĕвпе задачăсене пурнăçлама пулăшать:

- калаçăва аталантарасси;

- ачан хастарлă словарьне пуянлатасси;
- ăсра сăнарлас пултарулăха аталантарасси;
- сцена çинчи пултарулăхне аталантарасси.

Мĕнпе аван-ха «Саппун çинчи театр» мелĕ?

Спектакăле тухăçлă кăтартас тесен пурте кирлĕ: декорацисем, вĕсене вырнаçтарни, пуканесем, ширма, ачасем ларакан вырăн тата т.ыт. те, çавăнпа педагогăн çавнашкал организациллĕ самантсене татса пама нумай вăхăт кирлĕ.

«Саппун çинчи театр» мелĕ воспитателе тӳрех спектакль пуçлама пулăшĕ. Тепĕр минутран декорацисем актерсемпе пĕрле пыраççĕ, воспитатель пуканесене ăста куçарать, вĕсене мимикăпа, алăсемпе, сăмах çаврăнăш мелĕсемпе тултарать. «Саппун çинчи театр» ачасене постановкăпа интереслентерет, сюжета ăнланма пулăшать, "актерпа – куракана» пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлеме май парать.

Мĕнле ăсталама пулать-ха ăна? Чи кирлĕ хатĕр вăл – саппун. Саппунĕ тĕрлĕ тĕслĕ е пĕр тĕслĕ пулма пултарать. Ку вăл хăвăртан килет. Кашни хайлав валли тĕрлĕрен фон хатĕрлемелле, тĕп сăнарсене ăсталамалла. Ку япаласене фетртан, хатĕр ӳкерчĕксенчен е çыхса хатĕрлеме пулать. Саппун çине вĕсене çыпăçтаракан япалапа (липучкăпа) тыттармалла.

Пĕр саппун çинче тĕрлĕ сăнрсене усă курса темиçе юмах кăтартса пама пулать. Сăнарсене улăштарса, пуянлатса пырса юмахсен йышне ӳстерсе пыма пулать. «Саппун çинчи театр» мелĕ вĕрентекене ачасене ыйту лартма, танлаштарма, каласа пама, дидактика вăййисенче калаçса выляма, юмахран калав тума, çĕнĕ юмах шутласа кăларма, илемлĕ хайлавра ыррипе усаллине уйăрма вĕрентме пулăшать.

Малашне çак пособипе тĕрлĕ вариацисенче усă курма пулать.

Ачасем ӳссе пынă май дидактика задачисем кăткăсланаççĕ. "Саппун çинчи театрпа" пĕлĕве çирĕплетмелли тата анлăлатмалли занятисенче, çавăн пекех ирĕклĕ ĕçре те усă курма пулать. Ăна уйрăм вăйă пек йĕркелеме тата ачасемпе

ушкăнпа ĕçлеме (2 ачаран пуçласа 4 ача таран) пулать. Ача хăй тĕллĕн вылянă чухне вăйă пек усă курма пултарать.

Шкул çулне çитмен ачасене ӳнер литературипе паллаштарнă чухне саппун çинчи театр меслечĕпе сюрприз саманчĕ пек, дидактика вĕрентекен пособи пек усă курма меллĕ. Ачасене заняти вăхăтĕнче кăсăклантарма; ӳнер произведенийĕпе ĕçлеттерме; хутшăну лару-тăрăвне моделлеме; калавсен тĕсĕсене уйăрма, ача-пăчана хăй тĕллĕн ĕçлеме вĕрентнĕ чухне усă кураççĕ.

Ачасен пуплевне аталантарнă чухне «Саппун çинчи театр» мелĕ ыйту лартма, хăйсен кăмăл-туйăмне палăртма, танлаштарма, хак пама, диалог йĕркелес пултарулăхне аталантарма пулăшать. Тĕслĕхрен: старикпе карчăк калаçăвĕ («Йăва» юмахран).

«Саппун çинчи театр» мелпе усă курса воспитатель ачасене итленипе курнине пĕтĕмлетме, çĕннине курма, хăйсем шутласа кăларма вĕрентет, йывăрлăхсене çĕнтерме, сăнарсене калăплама хăнăхтарать, пĕлĕвне ӳстерме хистет.

Пирĕн ĕçĕн материалĕпе студентсем, ача садĕнче ĕçлекен воспитательсем, аслă воспитательсем, методистсем, кĕçĕн классра ĕçлекен вĕрентекенсем тата ашшĕ-амăшĕ хăйсен ĕçĕнче усă курма пултараççĕ. Вĕсене çак ĕç пулăшасса шансах тăрас килет.

**Усă курнă литература**

1. Ачасене шкулччен вĕрентмелли программа. Кузнецова Л.В. т.ыт. – Шупашкар: Чăваш вĕренӳн институчĕн издательстви, 2009.

2. Ачасене шкулччен вĕрентмелли тĕслĕх программи. Пуплеве аталантарасси. Илемлĕ литературăпа паллаштарасси. Вырăс (тăван мар) чĕлхене вĕрентесси Артемьева Т.В., Михайлова С.Г., Иванова Н.В. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015.

3. От рождения до школы. Примерная основная общеобразовательная программа дошкольного образования (Под ред. Н. Е. Вераксы, Т.С. Комаровой, М.А. Васильевой – 3-е изд. Испр. и доп.- М.: Мозаика - Синтез, 2012.